26-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 19 ЭРНЕКУН 141(6076) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Суракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

109. Йĕпреç МТС-ĕнчи **тракторсен бригади** (бригадирĕ **Кандюков** юлташ). Бригада майăн 25-мĕш тĕлне трактор ĕçĕсен планне 138 процент тултарнă. Бригадăра çак трактористсем фронтри пек ĕçленĕ: **Ольга Магасева** юлташ НАТИ маркăллă тракторпа ĕçлесе, кулленхи нормăна 133 процента çити тултарса пынă; **Евдокимова** юлташ, У—2 маркăллă тракторпа ĕçлесе, нормăна 199 процента çити тултарса пынă, **А. П. Павлов** юлташ, СТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, сменăри нормăна 200 процента çити тултарса пынă.

110. Йĕпреç МТС-ĕнчи **тракторсен бригади** (бригадирĕ **Николай Яковлев** юлташ). Майăн 25-мĕш тĕлне бригада трактор ĕçĕсен планне 115,4 процент тултарнă.

111. Йĕпреç МТС-ĕнчи **тракторсен бригади** (бригадирĕ **Макаров** юлташ). Бригада майăн 25-мĕш тĕлне трактор ĕçĕсен планне 113 процент тултарнă. Бригадăра трактористка **Ольга Майорова** юлташ вăрçăри пек ĕçленĕ, вăл, СТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, çурхи ĕçсен планне 113 процент тултарнă.

112. Йĕпреç МТС-ĕнчи **тракторсен бригади** (бригадирĕ **Семенов** юлташ). Бригада майăн 25-мĕш тĕлне çурхи ĕçсен планне 108 процент тултарнă, 300 килограмм горючи перекетленĕ.

113. Йĕпреç МТС-ĕнчи **тракторсен бригади** (бригадирĕ **Маркиянов** юлташ). Майăн 25-мĕш тĕлне бригада трактор ĕçĕсен планне 108 процент тултарнă.

114. Йĕпреç МТС-ĕнчи **тракторсен бригади** (бригадирĕ **И. З. Воробьев** юлташ). Майăн 25-мĕш тĕлне бригада трактор ĕçĕсен планне 140 процент тултарнă, бригадăна МТС-ăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. Бригадăра çак трактористсем фронтри пек ĕçленĕ: **Н. Соловьев** юлташ, газогенераторлă тракторпа ĕçлесе, сменăри нормăна 155 процент тултарса пынă. **Н. Назаров** юлташ, газогенераторлă тракторпа ĕçлесе, сменăри нормăна 117 процент тултарса пынă; **Григорий Иванов** юлташ, СТЗ маркăллă трокторпа ĕçлесе, сезонри задание 349 процент тултарнă, 160 килограмм горючи перекетленĕ.

115. **Михаил Семенов** — Çĕмĕрле МТС-ĕнчи тракторист. Семенов юлташ, хăйĕн тракторĕпе ĕçлесе, 15 кун хушшинче планра кăтартса панă 65 гектар вырăнне 145 гектар сухаланă, унăн тракторĕ çураки вăхăтĕнче пĕр кăлтăксăр ĕçленĕ.

Коммунистсемпе комсомолецсен ĕçре пример кăтартмалла

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче коммунистсемпе комсомолецсем малти ретсенче пырса гитлерла вăрă-хурахсене хирĕç хастарлăн та паттăррăн çапăçаççĕ. Вĕсем харпăрхăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешсе, совет воинĕсене çапăçура хавхалантарса пыраççĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Союз Геройĕн званине илме, орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнисем хушшинче коммунистсемпе комсомолецсем сахал мар.

Совет воинĕсен фронтри паттăрлăхĕ тылри ĕççыннисене предприятисенче, колхозсенче, учреждениссенче пĕтĕм вăй-халпа ĕçлеме хавхалантарать. Ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ ӳссе пыни çинчен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту кĕске вăхăт хушшинчех пĕтĕм халăх ăмăртăвĕ пулса кайни те питех те уçăмлăн каласа парать. Çак ăмăртăва организацилекенсем тата ертсе пыракансем—коммунистсем тата комсомолецсем. Фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче, учреждениссемпе шкулсенче пур ĕçре те коммунистсемпе комсомолецсем хăйсем пример кăтартса ĕççынни массисене фронта пулăшас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме мобилизацилесе пыраççĕ.

Большевик хăй пример кăтартнипе массăсене ертсе пырать. Партин Мăн Улхашри (Çĕмĕрле районĕ) пуçламĕш организацийĕ çураки вăхăтĕнче çерем çĕтсе тырă акма юрăхлă çĕр хатĕрлеме 800 хĕрарăма организацилесе ĕçе илсе тухнă. Коммунистсемпе комсомолецсем хастарлă ĕçленин примерне курса, колхозницăсем 100 гектар çерем çĕтсе тасатнă. Канашри вагонсем юсакан заводăн инструментальнăй цехĕнче ĕçлекен коммунистсем Моряков, Осипов тата ытти юлташсем нормăсене 300—360-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» артельре коммунистка Сорокина юлташăн бригади нормăна 145 процент таран тултарса пырать.

Коммунистсемпе комсомолецсем хăйсем пример кăтартса массăсене организацилесе пынă çĕрте çĕнĕ те çĕнĕ çĕнтерӳсем пулаççĕ. Кун çинчен Шупашкарти электроаппаратура завочĕн примерĕ те лайăх каласа парать. Пурте пĕлеççĕ, ку завод производство программине ирттерсе тултарнă, лайăх пахалăхлă продукци туса кăларнă, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Совечĕн тата Промышленноçăн пĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ.

М. И. Калинин Мускав хулинчи предприятисенчи партработниксен канашлăвĕнче 1942 çулти апрелĕн 21-мĕшĕнче çапла каланă: «массăсене кам ертсе пыма пултарать-ха? Çакна коммунистсем туса пыма тивĕçлĕ. Коммунистсен партийĕ массăсене ертсе пырать тата начар мар ертсе пырать». Çапла вара, массăсене организацилесе ертсе пыракансем—коммунистсем. Çавăнпа та вĕсенчен ыттисенчен ытларах ыйтаççĕ. Коммунист парти решенийĕсемпе лозунгĕсене пурнăçа кĕртсе пырать. Парти членĕ ĕç дисциплинине тата государство дисциплинине тытса пырас тĕлĕшпе кăтартуллă пулмалла, «массăсемпе çыхăнса тăрассине кулленех çирĕплетсе пымалла, ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе нушисем çине вăхăтра тата тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, партире тăман массăсене парти политикин тата решенийĕсен тĕп шухăшне ăнлантарса пымалла» (ВКП(б) Уставĕ).

Вăрçă вăхăтĕнче фронта мĕн кирлине пурне те парса тăрас тĕлĕшпе коммунистсем пур ĕçсене те пуçарса пыраççĕ, пуçарнă ĕçе ăнăçлăн вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. Большевиксем çĕнсе илме пултарайман крепоçсем çук. Массăсене хавхалантарма, пысăк та чаплă ĕçсенче ертсе пыма пĕлекен, чи йывăр условисенче те çĕнтерӳ патнелле ертсе пыма пултаракан большевик хăйне çирĕп тытать, хăйĕн çине шанать, ĕçре çине тăрать. Вăл вара кирек мĕнле йывăрлăхсене те çĕнтерет.

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртес ĕçре коммунистсем малта пыраççĕ. Вĕсем ертсе пынипе анлă сарăлнă социализмлă ăмăртăва малалла вăйлатса пырас пулать. Кашни предприяти, кашни колхоз, кашни ĕççынни хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пытăр.

Нумаях пулмасть ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Çак кунсенче ВЛКСМ Обкомĕн V-мĕш пленумĕ пулчĕ. Пленумсем паянхи кун пирĕн умра тăракан конкретнăй задачăсене кăтартса пачĕç. Çав задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе кашни коммунистăн, кашни комсомолецăн хăйĕн мĕнпур пултарулăхĕсемпе пĕлĕвĕсене, пĕтĕм вăй-халне парса ĕçлемелле. Совет Союзĕ Великобританипе Договор тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Килĕшӳ туни ĕççынни массисен шухăш-кăмăлне çĕклерĕ, вĕсем гитлерла Германие аркатса тăкас вăхăт çывхарнине шанса тăраççĕ, фронт ыйтакан хĕçпăшалсене, апат-çимĕçсене, тумтирсене çителĕклĕ парса тăрас тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме хатĕр.

Ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă çĕнĕ çĕкленĕвне малалла вăйлатса пырса, предприятисемпе колхозсем плансене срокчченех тултарса пымалла. Станокпа ĕçленĕ çĕрте, уйхир ĕçĕсене тунă чухне, государство умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕçре, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсемпе япаласем, самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине валли укçа тенкĕ пухнă çĕрте т. ытти ĕçсенче те коммунистсемпе комсомолецсен пример кăтартас пулать.

Тылра та, фронтри пекех, паттăрлăхпа пуçарулăх, ĕçченлĕх кăтартмалла, харпăрхăйĕн пурнăçне шеллесе тăмасăр ĕçлемелле. Пĕтĕм вăя тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетес, Хĕрлĕ Çара вăйлатас ĕçе памалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 17-мĕшĕнче фронтăн Севастополь участокĕнче пирĕн чăсем противникăн хаяр атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 16-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 30 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, 6 склада сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрсе тăкнă, торпеда катерне путарнă, противникăн пехотине 5 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче пирĕн часть хаяр çапăçура нимĕçсен 15 танкне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн танкистсем пехотăпа пĕрле çыхăнса кĕрешсе, нимĕçсен 8 танкне çĕмĕрнĕ, 14 орудине пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотин пĕр батальонне сапаласа янă.

* * *

Карпенко юлташ командир пулса ертсе пыракан пĕрлештернĕ отряд (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) противникăн тылĕнче виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна пĕтерсе тăкнă. Отрядри боецсем тăшманăн 14 танкне çĕмĕрнĕ, радиостанцие çĕмĕрсе тăкнă тата икĕ полкăн штабĕсене аркатса тăкнă. Тепĕр участокра гитлеровецсем артиллерирен тата минометсенчен персе хатĕрленсе çитнĕ хыççăн Литвинов юлташăн подразделенине атакăланă. Пирĕн боецсем штык вĕççĕн çапăçса противника каялла ывăтса янă. Резервсем илсе пырса тата танксем пулăшнипе, нимĕçсем малалла кайма тата темиçе хутчен хăтланса пăхнă. Нимĕçсен каялла чакмалла пулнă. Çапăçу хирĕнче противник хăйĕн çĕмĕрĕлнĕ 3 танкне тата салтакĕсемпе офицерĕсен 250 виллине ытла пăрахса хăварнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн часть, 2 кун хушши çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсемпе разведчиксем çав вăхăт хушшинчех нимĕçсен темиçе орудине çĕмĕрнĕ, 5 станковăй пулеметне, 2 минометне пĕтерсе тăкнă, темиçе дзотне, блиндажне тата пĕр наблюдательнăй пунктне ишĕлтернĕ.

* * *

Танксене хирĕç пемелли пăшал наводчикĕ М. Лупанов пĕр çапăçура нимĕçсен 3 танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн хăшпĕр районĕсенче кĕрешекен партизансен отрячĕсем 10 кун хушшинче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 1.200 çынна ытла вĕлернĕ, чугунçул çинче хĕçпăшалпа боеприпассем илсе пыракан 5 эшелона ӳпĕнтерсе янă, нимĕçсен 4 танкне, 3 орудине тата 14 грузовой автомашинине пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех партизансем нимĕçсенчен 3 миномет, 10 автомат, нумай винтовка, 500 мина тата 10.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Румынсен 4-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 5-мĕш полкăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Марин Буня çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи кадровăй дивизи шутланать, анчах та унта кадровăй салтаксем юлманпа пĕрех. Дивизин 10 пайĕнчен 9 пайĕ резервистсенчен тăрать. Вĕсенчен нумайĕшĕсем ирĕксĕр анчах вăрçаççĕ, мĕнле те пулин киле кайма тăрăшаççĕ. Çак кунсенче пирĕн ротăран Буткару тата Бяцу салтаксем тарнă. Салтаксем кăна мар, хăшпĕр румын офицерĕсем те Германия ку вăрçăра çурри аяла пулнă та ĕнтĕ тесе шутлаççĕ. Вĕсем çапла калаççĕ: халĕ ĕнтĕ нимĕçсем нумайччен тытăнса тăраймĕç, теççĕ».

* * *

Аяларах нимĕçсен вĕлернĕ ефрейторĕн Альфред Крейлингăн çумĕнче тупнă çырăвăн уйрăм сыпăкĕсене пичетлетпĕр: «...Пирĕн Шмидефельд хули пек пĕчĕк хулах çав тери пысăк çухатусем тӳсмелле пулассине кам шутлама пултарнĕ-ха? Пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра тăватă çул хушшинче фронтра Шмидефельд хулинчи халăхран 46 çын вилнĕччĕ. Хĕвелтухăç фронтĕнче вилнисем çинчен тулли сведенисем çук-ха. Халĕ 1942 çулти апрелĕн 1-мĕшĕччен вилнисен списокĕпе ним хыпарсăр çухалнисен списокĕ кăна пур. Вилнисен списокне эпĕ хам курнă. Унта 111 çын. Çапла ĕнтĕ Российăна хирĕç вăрçма пуçлани çулталăк та çитмен-ха, анчах та çав кĕске вăхăт хушшинчех пирĕн хулара халăх пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра 4 çул хушшинче пĕтнинчен халех 2 хут ытла пĕтнĕ пулать».

* * *

Варшавăра Польша патриочĕсем эсэсовецсем тăракан казарма çине питех те вăйлă çĕмĕрекен бомба пăрахнă. Çав бомба çурăлса кайнипе 18 оккупант вилнĕ. Варшава тулашĕнче нимĕçсен 3 офицерне тата 9 салтакне вĕлернĕ. Çак кунсенче нимĕç салтакĕсем çӳрекен кинотеатрта взрыв пулнă. Пĕлтернĕ тăрăх, взрыв вăхăтĕнче гитлеровецсем нумай вилнĕ тата аманнă.

Июнĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче пирĕн часть нимĕçсен танксем пулăшнипе наступлени туса пыракан пехотин атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 600 вилли ытла, çĕмĕрнĕ 9 танк тата хĕçпăшалсем нумай выртса юлнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕç автоматчикĕсем пирĕн пĕр чаçăн сулахай флангне пырса çапма хăтланнă. Гитлеровецсен çав хăтланăвне сирсе пăрахнă. Унтан противник часах, танксем пулăшнипе, пирĕн чаçăн сылтăм флангне атакăланă. Пирĕн боецсен вучĕ нимĕç пехотине танксенчен уйăрнă та пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Погорелов ертсе пыракан истребительсен ушкăнĕ нимĕçсен 3 танкне стройран кăларнă.

* * *

Летчик-истребительсем Соколов, Бабанов, Нерод тата Сатинов юлташсем пирĕн войскăсен çапăçуллă йĕркине хӳтĕлесе пынă. Часах нимĕçсен 30 бомбардировщикĕ курăнса кайнă, вĕсене 8 истребитель хӳтĕлесе пынă. Лайăх маневр туса, совет истребителĕсем пĕлĕтсем ăшне кĕрсе кайнă, унтан, меллĕ вăхăт суйласа илсе, нимĕçсене сасартăк атакăланă. Сывлăшри çапăçура пирĕн летчиксем «Юнкерс-88» йышши 2 самолета, «Юнкерс-87» йышши пĕр самолета «Мессершмитт-109» йышши 2 самолета пĕтерсе тăкнă, вара пĕр çухатусăрах хăйсен аэродромĕ çине таврăннă.

* * *

Калинин фронтĕнчи чаçсенчен пĕринче чи лайăх снайперсен слечĕ пулса иртнĕ. Слетра 41 снайпер пулнă. Вĕсенчен 12 боец çак отечественнăй вăрçăра малтанхи кунсенчен пуçласах çапăçаççĕ, 4 боец — 1941 çулти октябрьтен пуçласа, 13 боец — 1942 çулти январьтен пуçласа, 12 боец — 1942 çулти апрельтен пуçласа çапăçаççĕ. Хăйсем фронта пынăран вара çав слета пухăннă боец-снайперсем нимĕçсен 1470 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, пехотăн хĕçпăшалĕнчен персех нимĕçсен 8 самолетне ӳкернĕ, 22 танк, 7 автомашина, 46 миномет тата 10 пулемет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн боецсен Серов капитан ертсе пыракан ушкăнне нимĕç автоматчикĕсем çавăрса илнĕ пулнă. Хастарлă боецсем хаяррăн çапăçса нимĕçсен 3 офицерне тата 12 автоматчика пĕтерсе тăкнă та пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Украинăра, нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче кĕрешекен партизансен 4 отрячĕ пĕр уйăх хушшинче противникăн 7 поездне ӳпĕнтерсе янă, крушени пулнă пирки вара 7 паровоз, 84 товарнăй тата 80 пассажирски вагон ванса кайнă. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳснĕ.

* * *

179-мĕш полкăн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Андреас Ахатц çапла каласа панă: «Вырăссем пирĕн рота хӳтĕленĕ участока атакăларĕç. 10 танк пирĕн оборонăна татса кĕрсе кайнă та хăйсен çулĕ çинче мĕн лекнĕ çавсене пурне те çĕмĕрсе-ватса пыма тытăннă. 180 çынран 27 çын çеç чĕрĕ тăрса юлнă, вĕсем те-ха тыткăна парăннипе çеç чĕрĕ юлнă. Çиçĕм пек хăвăрт туса ирттермелли вăрçă пăчланса ларнине халĕ нумай салтаксем ăнланса илчĕç ĕнтĕ. Салтаксем хăйсем хушшинче час-часах çапла калаçаççĕ: «Пире пурне те пĕтерсе тăкиччен çак вăрçа пĕтерсе лартас пулать», теççĕ. Çитмеснине тата тăванĕсем хăйсем питĕ начар пурăнни çинчен тата питĕ хуйхăллă япаласем çинчен çырса пĕлтереççĕ».

* * *

Нимĕçсен вĕлернĕ танкисчĕ Р. Кутте çумĕнче «Клейн Верфер с сыновьями» ятлă заводăн хуçи çырнă çырăва тупнă. Çав çырура нимĕçсен тылĕнче лару-тăру начарланни çинчен те каланă. Хуйха ӳкнĕ заводчик çапла çырать: «Шел, çуркуннепе пĕрле кăнтăртан вĕçсе килекен вĕçен-кайăксем çеç мар килчĕç, тата çĕрлехи вĕçен кайăксем те çурутрав çинчен вĕçсе килчĕç. Англи летчикĕсем час-часах вĕçсе килеççĕ, нумай япалана ишсе хăвараççĕ... Манăн рабочисене нумайĕшне каллех çара илчĕç. Ку уйăх пĕтнĕ çĕре тата 200 çын шинельсем тăхăнаççĕ. Пушă вырăна эпир мĕнпе те пулсан тултарма тăрăшатпăр: хĕрарăмсене пухрăмăр, тыткăнри çынсене пуçтартăмăр, анчах та завод халлĕхе питĕ япăх, чарăна-чарăна çеç ĕçлет-ха. Ĕç капла пулни пирĕн фирмăна хытă çапать. Рабочисемпе чĕртавар çитмен пирки предприятисенчен пĕр пайĕ хупăнса ларать пулмалла...».

* * *

Белофинсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене тискеррĕн тыткалаççĕ. Çак кунсенче пирĕн боецсен лейтенант Бондарь ертсе пыракан ушкăнĕ Регозеро — Ухта чугунçулĕн участокĕсенчен пĕринче белофинсем асаплантарса вĕлернĕ икĕ красноармеецăн виллине тупнă. Вĕсенчен пĕри М. В. Васильев пулни паларнă. Тепĕр красноармеецăн хушаматне пĕлме май килмен. Икĕ боецăн вилли çинче те çĕçĕпе тата штыкпа чикнĕ йышлă суран сем пур. Белофинсем Васильев красноармеецăн куçĕсене шăтарнă, çăварне танксене пемелли снаряд чиксе хунă.

Севастополь çыннисен тĕреклĕхĕ

СЕВАСТОПОЛЬ, июнĕн 16-мĕш **(ТАСС спецкорĕ)**. Севастополе хӳтĕлекенсем, тăшманăн атакисене сире-сире пăрахса, ăна халран яраççĕ, пĕтерсе пыраççĕ.

Фронтăн участокĕсенчен пĕринче ĕçĕ ăнманнине курă, тăшман тепĕр участокра пехотăпа танксем нумай пухса хунă, çапла майпа вăл пирĕн оборонăн начартарах хӳтĕленекен вырăнне тупасшăн пулнă. Хăйĕн йышлă атакисене противник пикировка тăвакан бомбардировщикĕсен пысăк ушкăнĕсемпе тата артиллерирен пĕр çĕрелле вăйлăн персе тăрса пулăшса пырать.

Гитлеровецсем кунта та пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе унтер-офицерсем çапла каласа параççĕ: нимĕç командованийĕ çапăçăва тылри сапернăй чаçсене те кĕртсе янă, теççĕ. Сапернăй батальонăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ Рудольф Шульман çапла каланă: нимĕçсем батальонăн пур ротисене те пĕрин хыççăн теприне çапăçăва кĕртсе пынă, çав ротăсене пурне те тенĕ пекех ĕнтĕ пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ротисенче нумайĕшĕнче 5—7-шер салтак çеç тăрса юлнă.

Севастополь патĕнчи хаяр çапăçусен кашни кунĕнче социализмлă тăван çĕршывăн çĕнĕ геройĕсем çураласçĕ.

Политрук заместителĕ Яковенко пирĕн пулемет расчечĕсенчен пĕри пеме пăрахнине асăрханă. Яковенко çав пулемет патне шуса пынă та расчетăн боецĕсем аманнине курнă. Политрук заместителĕ пулемета тытнă та хĕссе пыракан тăшмана ăшалама тытăннă. Çав вăхăтра ăна пуçĕнчен суранлатнă, анчах вăл çаплах пеме пăрахман. Нимрен хăраман боец тĕл персе 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пулеметчик Хасанов пĕрремĕш пульăпах фашистсен офицерне персе ӳкернĕ, çав офицер салтаксене атакăна илсе пынă.

Тинĕс çинчи крепоçа боецсемпе пĕрле тата хулари ĕççыннисем хӳтĕлеççĕ. Оборона предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисем крепоçа хӳтĕлекенсене пĕр чарăнмасăр минăсем, минометсем, гранатăсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем парса тăраççĕ. Рабочисем талăкĕ-талăкĕпе станоксем çумĕнчен хăпмаççĕ.

Севастополь çыннисен тимлĕхĕпе тĕреклĕхĕ кулленех ӳссе пырать.

М. ТУРОВСКИЙ.

Тăшманăн аэродромне тапăнни

КАЛИНИН ФРОНЧĔ. Тăшманăн аэродромĕ çине пирĕн артиллеристсем сасартăк вăйлăн пеме тытăннă. Темиçе машинăна пĕтерсе тăкнă, ыттисене нимĕçсем васкасах урăх вырăна куçарнă. Тĕттĕм пулсан пирĕн боецсен пĕр ушкăнĕ фронт линийĕ урлă каçнă та тăшманăн аэродромĕ çине хăюллăн тапăннă.

Икĕ сехет хушшинче пирĕн боецсем тăшманăн вĕçевпе техникăл составĕнчи салтакĕсемпе офицерĕсене 50 çынна пĕтерсе тăкнă, 4 планера, горючи складне вут тивертсе çунтарнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Ирĕклĕхе юратакан халăхсем СССР, Англи тата США хушшинчи туслăх çирĕпленнине ырлаççĕ

АНГЛИЯ

„Иккĕмĕш фронт тăвассине Англи халăхĕ çулăмлăн кĕтсе тăрать“

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Англире тухса тăракан хаçатсем Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договор çинчен çаплах нумай çыраççĕ, хаçатсем Европăра 1942 çулта иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе халех тумалли задачăсем пирки пĕтĕмпех калаçса татăлнине уйрăмах хытă палăртаççĕ.

Англири профсоюзсен тата кооперацин темиçе деятелĕ Англипе Совет Союзĕ хушшинче договор тунине тата иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе килĕшсе татăлнине ырласа сăмахсем каланă. Кооперативнăй партин председателĕ, парламент членĕ Барнс çапла каланă: «Иккĕмĕш фронт тăвассине Англи халăхĕ çулăмлăн кĕтсе тăрать», тенĕ. Горняксен федерацийĕн председателĕ Лаутер та çавăн пекех каланă. Барнспа Лаутер продукци туса кăларассине питĕ вăйлăн ӳстерме чĕнеççĕ.

США

Гитлера Европа континентĕнче чи тĕрексĕр вырăнта пырса çапмалла

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем çапла çыраççĕ: Европăра 1942 çулта иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе халех тумалли задачăсем пирки В. М. Молотов Лондонра тата Вашингтонра пĕтĕмпех калаçса татăлнине Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи обществăллă организацисенче нумайĕшĕнче питĕ хĕрӳллĕн ырлаççĕ.

Производствăллă профсоюзсен конгресĕн Нью-Йоркри отделенийĕн вице председателĕпе секретарĕ çапла каланă: рабочисем Гитлера тата тĕнĕл держависене Европа континентĕнче чи тĕрексĕр вырăнта пырса çапма çунса тăраççĕ, тенĕ.

ИРАН

„Договор фашизма теппипех аркатса тăкма пулăшать“

ТЕГЕРАН, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). В. М. Молотов Лондона тата Вашингтона кайса килни çинчен тата Совет Союзĕпе Великобритани хушшинче договор туни çинчен Иранра нумай çыраççĕ, нумай калаçаççĕ. Тегеранри радио июнĕн 12-мĕшĕнче перс чĕлхипе, араб чĕлхипе, вырăс чĕлхипе, акăлчан чĕлхипе, тĕрĕк чĕлхипе, француз чĕлхипе тата нимĕç чĕлхипе панă мĕнпур передачăсенче те пĕтĕмпе Англипе Совет Союзĕн тата Совет Союзĕпе Америкăн коммюникисем çинчен каланă тата çав договорăн текстне тĕплĕн каласа панă. Радио тăрăх Иденпа Молотов юлташăн сăмахĕсене вуласа панă.

«Мардом» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: 'Англипе Совет Союзĕ хушшинчи договора туни тĕнчери чи паллă та паха событисенчен пĕри пулса тăрать, мĕншĕн тесен çав договор вăл фашизма пĕтĕмпех аркатса тăкма пулăшать çеç мар, вăл тата Европăра малашне халăхсен ирĕклĕхĕ çинче тытăнса тăракан йĕрке тăвассине те палăртса парать. Англипе Совет Союзĕ хушшинчи договора тунипе эпир питĕ хавасланатпăр,—тет хаçат,—мĕншĕн тесен вăл СССР, Англи тата Иран хушшинчи союза çирĕплетет».

ИНДИЯ

Историре пысăк вырăн йышăнса тăмалли событи

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Индире тухакан хаçатсем виççĕмĕш кун ĕнтĕ Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договор çинчен пуринчен те ытларах çыраççĕ.

«Бомбей кроникл» хаçат çапла пĕлтерет: Англипе Совет Союзĕ хушшинчи договор, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем те ырланăскер, историре çак ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче пысăк вырăн йышăнса тăмалли питех те пысăк событи пулса тăрать.

Юнайтед пресс Оф Индиа агентстви çапла калать: конгресăн паллă членĕ тата Мадрас правительствин премьерĕ пулнă Раджагодалачария Индин политикăллă лидерĕсене хăйсен вăрçă тĕлĕшпе йышăннă позицийĕсене улăштарма чĕнет, «Англипе Совет Союзĕ хушшинчи договора тунипе халь йăлтах урăхла лару-тăру пулса тăнине» шута илме чĕнет.

Çак агентствах тата çапла пĕлтерет: Неру хăй договор çине мĕнле пăхнине кĕскен çапла каласа панă: «Питех те аван», тенĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн V-мĕш пленумĕ

Июнĕн 16—17-мĕш кунĕсенче ВЛКСМ Обкомĕн черетлĕ V-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленумра çураки ĕçĕсен итогĕсемпе кăçалхи тырпула тăкаксăр пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Пивоваров юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик комсомол организацийĕсем çуракине хатĕрлесе ирттерес тĕлĕшпе парти, совет тата çĕрĕç органĕсене пысăк пулăшу панине палăртрĕ.

ВЛКСМ Обком бюровĕн решенийĕ тăрăх декабрĕн 25-мĕшпе январĕн 25-мĕш хушшинче ялхуçалăх машинисемпе туртăм вăйне çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе уйăхлăх пулса иртрĕ. Çав вăхăтра республикăри комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе пурĕ 925 сеялка, 7.241 плуг, 8.518 сӳре тата 782 комплект кӳлмелли хатĕрсем юсанă.

Комсомолецсемпе çамрăксем мартăн 5-мĕшпе 20-мĕш хушшинче вăрлăха сортласа тасатас тĕлĕшпе икэрнелĕх туса ирттерчĕç. Çав хушăра çамрăксем 177.916 центнер тырă сортланă.

Сталинград облаçĕнчи Иловлино МТС-ĕнчи комсомолецсем пуçарнă ĕçе хутшăнса, республикăри çамрăксем тĕрлĕрен машина пайĕсене 35 пин штука ытла пухса МТС мастерскойĕсене пачĕç.

Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем вырăнти удобренисем нумай пухнă. Уя 204.850 лав тислĕк кăларнă.

Çĕршер çамрăксем çуракинче активлăн ĕçлерĕç. Коммунистсемпе комсомолецсем ĕçре пример кăтартрĕç. Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри 16 комсомолецран çураки вăхăтĕнче 3 çын бригадир, 8 çын сухаçă, 2 çын акакан пулса ĕçленĕ, виççĕшĕ сӳреленĕ. А. Крупина, Л. Яковлева комсомолкăсен бригадисем çуракине 5 кун хушшинче туса пĕтернĕ.

Çураки вăхăтĕнче хĕрарăм-трактористкăсем начар мар ĕçлерĕç. Вăрмар МТС-ĕнчи комсомолка-трактористка Онуфриева юлташ У—2 тракторпа ĕçленĕ. Вăл планна кăтартнă 30 гектар вырăнне çуракинче 75,3 гектар сухаланă, плана 251 процент тултарнă, горючине 65 килограмм перекетленĕ.

Кувакино, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче те хĕрарăм-трактористкăсен бригадисем плана ытлашшипех тултарнă.

Çураки кăçал Калинински, Хĕрлĕ Чутай, Шăхасан, Вăрмар, Çĕмĕрле районĕсенче организованно иртрĕ. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, Ишлей, Октябрьски, Советски, Сĕнтĕр районĕсем те аванрах ĕçлерĕç.

Халĕ колхозсем хĕрсех уборкăна хатĕрленеççĕ. Уборкăна хатĕрленсе организованно ирттерес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Чи малтанах комсомолецсем хăйсем колхоз производствинче активлăн ĕçлеме тивĕçлĕ. Анчах хăшпĕр комсомолецсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă минимума та пурнăçламаççĕ. Первомайски районри «Красный луч» колхозри комсомолец-колхозник Василий Юркин 1942 çулта пĕр ĕçкунĕ те туман, ĕçлеме пачах та тухмасть. Çав районрах «Большевик» колхозри комсомолка Лидия Игнатьева кăçал 1,2 ĕçкунĕ, Анна Кириллова комсомолка 6,7 ĕçкунĕ çеç тунă.

Комсомол организацисем ĕçрен пăрăнса çӳрекен кахалсемпе татăклăн кĕрешме тивĕçлĕ.

Малалла Пивоваров юлташ утă çулнă тата уборкăна хатĕрленсе ирттернĕ чухне комсомол организацийĕсем тумалли ĕçсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа пленум комсомолăн республикăри организацийĕсен йышне ӳстересси çинчен ВЛКСМ Обком секретарĕн П. Михайлов юлташăн докладне итлерĕ.

1941 çулти июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1942 çулти июнĕн 1-мĕшне çити, отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, 2.897 çамрăк комсомола кĕнĕ. Вĕсенчен 1.017 хĕрарăм. Ку ĕнтĕ комсомол союзра тăман çамрăксемпе аванрах ĕçлеме тытăннине кăтартать.

Анчах пленум комсомол йышне ӳстерес тĕлĕшпе Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Шăхасан тата Етĕрне районĕсенче ĕç начар тăнине палăртрĕ. Шăхасан районĕнче пуçламĕш организацисем пурĕ 86. Вĕсенчен 76 организаци 1942 çулти 1-мĕш кварталта пĕр çынна та комсомол ретне илмен. ВЛКСМ Хĕрлĕ Чутай райкомĕ май уйăхĕнче комсомола кĕме ыйтса панă заявлени пĕрре те пăхса тухман. Улатăр, Çĕмĕрле, Куславкка районĕсенче тата Шупашкар хулинче Ленинла комсомол ретне рабочисене, колхозниксене, трактористсене сахал илеççĕ. Комсомолăн чылай организацийĕсенче союзри ĕçе япăхтарса янă, çавăн пирки хăшпĕр çĕрте организацисем сапаланса кайнă. Чылай çĕрте организацисем 2—3 çынран тăрса юлнă. Пленум ВЛКСМ райкомĕсене вăйсăрланнă организацисенче союз ĕçне çитес кунсенчех йĕркелеме, малта пыракан çамрăксене комсомола илсе йыша ӳстерме хушрĕ.

Çавăн пекех пленум çĕнĕрен кĕнĕ çамрăк комсомолецсемпе ытларах ĕçлеме кирлине палăртрĕ.

Çĕмĕрле, Пăрачкав, Канаш, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче çамрăксен комсомола кĕме ыйтса панă заявленийĕсене пăхса тухмасăр нумай выртараççĕ, комсомола илнĕ çамрăксене комсомол билечĕ парассине вăраха яраççĕ. Пленум кăна киревсĕр ĕç тесе шутларĕ. ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсене ку тĕлĕшпе ĕçе тĕпренех юсама хушрĕ.

Пленумра Парти Контроль Комиссийĕн уполномоченнăйĕ Серов, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров, Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи политсектор начальникĕ Чернов юлташсем пулчĕç.

Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташ комсомол организацийĕсен шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен сăмах тухса каларĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма пленум Аверьянова юлташа çирĕплетрĕ.

Промышленноçпа транспортри ăмăрту

Пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура май уйăхĕнче мала тухнăшăн Шупашкарти электроаппаратура завод коллективне Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн тата пĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕç. Çак пысăк хисеп завод коллективне тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем халĕ нихçанхинчен пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ, июнь уйăхĕнче те малти вырăнтах юласшăн тата Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн кĕрешеççĕ.

Социализмлă ăмăрту уйрăм рабочисем хушшинче те анлăн сарăлса кайрĕ. Çак ăмăртура халĕ инструментальнăй цехри токарь Ронай юлташ лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Вăл сменăри нормăна куллен 150 процент тултарма пултарнă, халĕ 400 процент тултарать, лайăх пахалăхлă детальсем туса кăларать. Механически цехри комсомолец-токарь Коган юлташ та нормăна 150 процент тултарма обязательство илнĕ. Çамрăксене пример кăтартса ĕçлесе, нормăна вăл 200 процент тултарать. Çавăн пекех фрезеровщица Башмачникова, сборщик Бондарь юлташсем те хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ — сменăри нормăсене пĕрмаях 230-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

Цехсем хушшинчи ăмăртура Цфасман юлташăн цехĕ малта пырать. Ку цех коллективĕ иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ заводри куçса çӳрекен ялава хăйĕн аллинче тытса тăрать. Графика пăхăнса ĕçлесе, рабочисем кунран-кун ытларах продукци параççĕ.

А. МАШКАРИН.

Аш-какай комбинатĕнче

КАНАШ. Аш-какай комбиначĕ вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ ĕçлет, ĕççыннисемпе Хĕрлĕ Çара аш-какай продукчĕсем ытларах парассишĕн кĕрешет. Вăрçă пуçланнăранпа комбинат хăйĕн производство планне ытлашшипех тултарса пырать. Иртнĕ çулта планран ирттерсе 10-шар пăт какай, колбаса тата ытти продуктсем пачĕ. Комбинатăн кăçалхи ĕçĕсем те начар мар. Иккĕмĕш квартал планне 50 кун хушшинчех тултарнă. Çак çитĕнӳ рабочисем ăмăртса ĕçленинчен, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пынинчен килнĕ. Январь уйăхĕнче нормăна кашни рабочи вăтамран 100 процент туртарнă пулсан, февральте 164 процент, мартра 179 процент тултарнă. Апрельпе май уйăхĕнчи ĕç тухăçлăхĕ те çавăн чухлех.

Уйрăмах опытлă рабочисен ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Акă, Володин, Боданов юлташсем выльăхсене пусас задание 250 процент, Шерешкова, Боброва тата Плешкова юлташсем хырăмлăхсене татасас нормăна 200 процент тултараççĕ. Возчик Ахмедзянов юлташ та хушнă ĕçе икĕ хут ирттерсе тăвать. Çакăн пек стахановецсемпе ударниксем камбинатра сахал мар.

Малта пыракан рабочисем хăйсен тĕп ĕçĕ тăрăх нормăна ирттерсе тултарнă вăхăтрах тепĕр профессие вĕренеççĕ. Сăмахран, кладовщик Сафронов юлташ юнран колбаса пĕçерме вĕренсе çитнĕ. Халĕ вăл çак ĕçре нормăна 180 процент тултарать.

Т. ИВАНОВ.

Вăрман хатĕрлевĕнчи стахановецсем

ВĂРНАР, июнĕн 18-мĕш. (Телефонпа). Карăкăри вăрман пунктĕнче ĕçлекенсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çĕршывпа фронта вăрман ытларах парассишĕн кĕрешеççĕ. Вăрман касакансен Алексеева юлташ ертсе пыракан бригади задание кунсерен 103 процент тултарать. Бригадăри хĕрарăмсем А. Павлова, М. Герасимова юлташсем арçынсенчен пĕртте кая ĕçлемеççĕ. И. Купчихин юлташăн бригади те вăрман касмалли нормăна ирттерсе тултарать. Т. Калюкова юлташăн бригади вăрман турттарас ĕçре лайăх ĕçлет.

В. ШАХАЛОВ.

---

10 кун хушшинче кроса 50 пин çын ытла хутшăннă

Июнĕн 7-мĕшĕпе 17-мĕш хушшинче республикăра кроса пурĕ 50.392 çын хутшăннă. Малтанхи кунсен итогĕсем тăрăх, крос Шупашкар хулинче организованно пырать. Вунă кун хушшинче хулара 5.455 çын кросра пулнă. Вĕсенчен 5.311 çын нормăсем панă.

Крос республикăри хăшпĕр районсенче те аван пырать. Сĕнтĕрвăрри районĕнче 3.673 çын, Вăрмар районĕнче, 3.583 çын, Елчĕк районĕнче 3.567 çын кроса хутшăннă.

Анчах кроса ирттерес тĕлĕшпе Етĕрне районĕ кая юлса пырать. Унта кросра мĕнпурĕ те 368 çын кăна пулнă. Çавăн пекех кроса Шăмăршă, Канаш районĕсенче те начар организациленĕ. Ку районсенче кроса 640-шер çын кăна хутшăннă.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

ОКТЯБРЬСКОЕ. Тутпай Есмĕлĕнчи «Красная Чувашия» колхозри комсомолецсен пухăвĕ Ишлей районĕн центрĕнчи хĕрарăмсен подразделенийĕ самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа пухма чĕннине сӳтсе-яврĕ. Пухура пулнă комсомолецсемпе комсомолкăсем çак чĕнĕве ырларĕç. Боевой самолетсен звенине тума 13 çын пĕтĕмпе 385 тенкĕ укçа пачĕç. Е. Абрамова, Е. Кузьмин — 50-шар тенкĕ, Г. Чупраков — 40 тенкĕ, М. Марачкова — 35 тенкĕ, ытти комсомолецсем 30-шар тенкĕ пачĕç. Пуху хыççăн колхозниксем хушшинче ĕçлеме тытăнтăмăр. Вĕсем те хавасланса пулăшаççĕ. Ĕçе пуçарса янă кунах колхозĕпе пурĕ 500 тенкĕ пухнă. Çак ĕçе малалла та туса пыратпăр.

А. ОДИНЦОВ.
Комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Ишлей районĕн центрĕнчи хĕрарăмсен подразделенийĕ чĕнсе калани çине ответлесе, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем самолетсен звенине тума 165 тенкĕ, Каганович ячĕпе тăракан колхозри комсомол организаци 400 тенкĕ пухрĕç. Комсомолецсем Василий Уткин 30 т., Ярсунов 15 т., И. Васюткина 30 тенкĕ пачĕç.

А. ХАЛДЫРМИНА.

РЕСПУБЛИКĂРИ УЙХИРСЕНЧЕ

Куççа килнĕ çемьесене пулăшаççĕ

ШĂХАСАН. Районри колхозсем куçса килнĕ çемьесене пахча вырăнĕсем панă. Çав участоксене акса хăварма вĕсене çĕрулми, сухан тата ытти вăрлăхсем те хатĕрлесе панă.

Куççа килнĕ çемьесем хăйсене панă çĕр лаптăкĕсем çине пахча-çимĕçсем лартса хăварчĕç.

В. ЯКОВЛЕВ.

Колхоз хăйĕн обязательствине тултарнă

Çак иртнĕ кунсенче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Родина» колхоз государствăна 1942 çулшăн аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм парас обязательствăсене çĕр процентĕпех парса татрĕ. Колхозăн фермисем халĕ сĕт-çу обязательствине колхозниксемшĕн шама пуçланă.

А. ШАРАСЬКИН.

АРМАНСЕНЕ ЮСАМАЛЛА

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Районра шыварманӗсемпе çиларманĕсем тата механизациленĕ армансем пурĕ 69. Вĕсенчен 8-шĕ чылайранпа ĕçлемеççĕ.

Пĕлтĕр Шĕкĕрти «Новый путь» колхозăн çиларманĕ 1.194 центнер, «Канаш» колхозăн шыварманĕ 1.275 центнер, Шăхасанти «Красный Октябрь» колхозăн арманĕ 3.836 центнер, Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхозăн арманĕ 3.701 центнер тырă авăртнă. Çак асăннă колхозсем çиларманĕсенчен 5—6-шар пин, шыварманĕсенчен 20—23-шер пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Çав вăхăтрах Питикассинчи Сталин, Çĕнĕ Мамири Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсен арманĕсем ĕçлемесĕр ларнă. Ĕçлемесĕр ларнин сăлтавĕ унта мĕнпурĕ те мельниксем çуккинче çеç пулнă.

Районри хăшпĕр колхозсем арман хуçалăхне юсавлă тытмаççĕ. Сительти «Победа», Матшури «Молодой колхозник», Туçи Çармăсри «Красный трактор» тата Шуртанри Чапаев ячĕпе тăракан колхозсен çиларманĕсем юхăнса кайнă. Вĕсем ĕçлеме юрăхсăр. Апла пулин те вĕсене юсама тăрăшмаççĕ. Çав армансем вĕсем хуçасăрла тыткаланипе, пĕчĕк ванчăксене çийĕнчех юсаса тăманнипе юхăнса кайнă.

Районра кĕрпе çурмалли, çăм таптармалли армансем те пур. Вĕсем те лайăххăн ĕçлеймеççĕ.

Халĕ райплан çĕмĕрĕлнĕ армансене юсама йывăç панă. Виçĕ çиларманне юсаса ĕçе янă ĕнтĕ. Пур армансене те юсаса ĕçе ямалла.

С. ШАДИН.

Иранăн Совет Союзĕнчи посолĕ пулнă г. Махомед Саед Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне В. М. Молотова янă телеграмма

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Иранăн Совет Союзĕнчи посолĕ пулнă г. Махомед Саедран, ăна çĕнĕ вырăна лартнипе нумаях пулмасть Ирана тухса кайнăскертен, çакăн пек телеграмма илнĕ:

«Пирĕнпе туслă тата союзлă Совет Союзĕнчен тухса кайнă чухне—Эсир мана эпĕ Совет Союзĕнче пурăннă вăхăтра Иранпа Совет Союзĕ хушшинчи туслă та союзлă çыхăнусене çирĕплетес ĕçре пулăшнăшăн Сире чĕререн тав тăвассине хамăн хавaслă тивĕç тесе шутлатăп.

Эсир малашне те пулăшса тăрассине шанса, эпĕ Сире чĕререн хисепленине, Совет Союзне ăнăçусем туса чечекленсе пыма тата халăхсен правипе тележлĕхĕшĕн пыракан паттăр çапăçура çиеле тухма суннине йышăнма ыйтатăп.

САЕД».

Фашистсен лагерĕнчи харкашу

Венгри премьерĕ Каллаи тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Венгрин премьер-министрĕ Каллаи, хальхи вăхăтра Çурçĕр Трансильванире çӳрекенскер, «Венгрин пĕррехмĕш тивĕçĕ Венгри аллинчи Трансильвание хӳтĕлесси пулса тăрать», тесе тухса каланă.

Уйрăмăнах çакна асăрхаттараççĕ: Каллаи хăйĕн çав заявленине Гитлер «Венăри арбитраж» 1940 çулта тунă решение çирĕплетме килĕшӳ памасăр хăварнă хыççăн тунă. Çав арбитражăн решенийĕ тăрăх ун чухне Çурçĕр Трансильвание Венгри аллине панă пулнă. Çавăн пек килĕшӳ паманнипе Гитлер Румынине лăплантарма шутланă пулмалла. Мĕншĕн тесен Румыния хăй енчен Трансильвание Венгрирен каялла ыйтать.

Илнĕ сведенисем тăрăх, Гитлерпа Каллаи иккĕшĕ тĕл пулсан СССР Союзне хирĕç пыракан вăрçа Венгрия мĕн чухлĕ хутшăнасси çинчен калаçнă. Венгрия хăй тĕллĕн государство пулса тĕнине пĕтерсе лартассипе тӳрремĕнех хăратнă пирки Венгри диктаторĕ Хорти иртнĕ хĕлле Гитлера, вăл хушнă тăрăх, СССР Союзне хирĕç пыракан вăрçă валли çĕнĕ вăйсем пама пулнă. Анчах та Хорти хăй пама пулнă тупă какайĕнчен питех те сахал пайне кăна панă, ăна та фронта мар, совет партизанĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре кăна ăсатнă. Мобилизациленĕ çынсен ытти пайне, Румыния Венгрие çар вăйĕсемпе хăратать тесе, Румыни чиккине хăварнă. Венгрие хĕсес шутпа Гитлер Германин Бутапештри посланникне Хортипе Каллаине çапла пĕлтерме хушнă: Румынипе Венгри хушшинче территори пирки пуçланса кайнă тавлашăва татассине вăрçă пĕтиччен хăвармалла тенĕ, анчах та халĕ Трансильвания Венгрирен Румыни аллине куçас пек туйăнать, мĕншĕн тесен Румыния СССР Союзне хирĕç пыракан вăрçа ытларах хутшăнать. Трансильвани вырăнне Венгрие Югославин хăшпĕр территорийĕсене пама пулаççĕ. Германин çак сĕнĕвĕпе Гитлерăн Венгрири лакейĕсем те тӳрремĕнех килĕшмеççĕ. Каллаи Гитлера çапла каланă пулать: Румыния хăйĕн войскисене Венгри чиккинчен илсе кайсан тата Трансильвание каялла ыйтма пăрахсан тин Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне Венгри войскисене малашне яма май пур, тенĕ.

Çакăн хыççăн Каллаи ятарласа демонстраци тăвас шутпа Трансильвани тăрăх çӳреме тухса кайнă. Июнĕн 15-мĕшĕнче вăл Венгри правительствин хăшпĕр членĕсемпе тата парламентăн нумай депутачĕсемпе пĕрле Марошвашархее пынă. Кунта вăл сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çапла пĕлтернĕ: «Венгрин хальхи вăхăтра чи малтан Венгри çарне, вăл Трансильвание хӳтĕлеме пултартăр тесе, çирĕплетессишĕн тăрăшмалла» тенĕ. «Çурçĕр Трансильванире Румыни пусмăрĕ айĕнче 22 çул хушши асапланнă венгерсен хĕнхурĕ вĕçне çитрĕ» тенĕ Каллаи.

Америка самолечĕсем Румыни çине вĕçсе пырса тапăнни

Америка бомбардировщикĕсем Румыни çине вĕçсе пырса тапăннă. Вĕсем унта нефть промыслисене тата нефть тасатакан заводсем çине бомбăсем пăрахнă пулас, тесе çырать Америкăри «Нью-Йорк таймс» хаçат. Англин Рейтер агентстви çав бомбардировщиксем Египетри аэродромсенчен вĕçсе тухса кайнă тесе пĕлтерет.

Румынирен каялла таврăннă чухне 4 бомбардировщик Турци çĕрĕ çине ирĕксĕр анса ларнă. (ТАСС).

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Июнĕн 13-мĕшпе 17-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Вăрçă ĕçĕсем халĕ кăнтăрта — Австралин çурçĕр çыранĕнче, çурçĕрте —Алеут утравĕсен районĕнче пулса пыраççĕ.

Мидуэй утравĕ çывăхĕнче çапăçнă вăхăтрах японецсем Алеут утравĕсен хĕвеланăç пайне, çав шутра Атту утравĕ çине те пырса кĕнĕ. Çав утрав çинче çынсем пурăнмапа пĕрех. Кунта çулталăкĕпе тенĕ пекех тĕтре тăрать, çавă сывлăшри тата тинĕсри çапăçусене йывăрлатать. Апла пулин те Америкăн тинĕс-çар вăйĕсем тата çĕр çинчипе сывлăшри вăйĕсем японецсен утравсем çине антарнă чаçĕсене атакăлаççĕ. Америка авиацийĕ сахалтан та Японин виçĕ крейсерне, пĕр эсминецне, пĕр канонеркине тата пĕр транспортне сиенленĕ. Çапăçусем малалла пыраççĕ. Алеут утравĕсен районĕнчи пĕтĕмĕшле лару-тăру улшăнман.

Китайра пысăкрах çапăçусем хĕвелтухăç енчи çыраносенче — Чжецзян тата Цзянси провинцийĕсенче пыраççĕ. Японецсем Чжэцзян — Цзянси чугун çулĕ тăрăх кăнтăр-хĕвелтухăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле тапăнса пыраççĕ. Тăхăр кун хушши тимлĕн çапăçнă хыççăн (вăл çапăçусенче японецсем пысăк çухатусем тӳснĕ) вĕсем Чучжоу хулине илме май килнĕ.

Çав вăхăтрах Япони войскисен тепĕр ушкăнĕ Çурçĕрти провинцисенчен (Наньчан енчен) кăнтăралла, Чжецзян провинцинчен куçса пыракан войскăсене хирĕç тапăнса пырать. Çак енче японецсем 100—120 километр таран куçнă. (ТАСС).

Францин оккупациленĕ пайĕ çине вĕçе-вĕçе пырса тапăннин результачĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Францин оккупациленĕ пайĕнче Англи авиацийĕ питех те пысăк ишĕлтерӳсем туса ирттернĕ. Малтанхи даннăйсем тăрăх (вĕсене французсен журналĕсенче пичетленĕ), Парижри «Рено» завочĕсене кӳнĕ убытка 400 миллион франк таран шутланаççĕ. Франци докĕсем майăн 7-мĕшпе 21-мĕш хушшинче тӳснĕ убыткăсем 300 миллион франка çитеççĕ. Майăн 8-мĕшĕнче Нант çине вĕçсе пырса тапăннă чух верфьсенчи темиçе цеха, насос станцине, чертежсемпе конструкцисем тăвакан бюрона сиенленĕ. Çак верфьсенче ĕçлеме июль уйăхĕсĕр пуçлаймаççĕ пуль. Париж çывăхĕнче «Гном тата Рон» ятлă паллă завода, тимĕр-тăмăр шăратакан «Соте» завода тата «Лоррэн—Дитрих» завода çĕмĕрсе тăкнă, навигаци аппаратурисем тăвакан «Эриксон» ятлă завода çунтарса янă. «Гудрич» завода тата «Аммо» ятлă авиазавода ишĕлтернĕ. Трэ-Сюр-Сен хулинче подводнăй лодкăсем тăвакан верьфсенчен çуррине тата унта тăвакан подводнăй лодкăсенчен виççĕшне пĕтерсе тăкнă.

Пушăртан сыхланас ĕçе лайăх йĕркеленĕ

ШĂХАСАН. Енĕшри Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра пушарпа кĕрешекен ирĕклĕ дружина (начальникĕ Д. Краснов) лайăх ĕçлет. Дружина пӳртсен кăмакисем тата мăрйисем юсавлипе юсавлă маррине тĕрĕслесе тухнă, юсавлă марисене халех юсама хушса хăварнă. Ял хушшинче каçхине те, кăнтăрла та хуралсем йĕркеллĕ тăраççĕ. Кашни кил умнех шыв тултарнă катка-пичкесем лартнă.

Г. ШАШКОВ.

* * *

КАНАШ. Ямашкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра вут-кăварпа кĕрешекен ирĕклĕ дружина хăйĕн хуçалăхне юсавлă тытать. Урапасене, пичкесене юсаса, насоссене тасатса вырăнаçтарса лартнă. Дружинăра пурĕ 20 çын. Пушар каланчи çинче кунĕн-çĕрĕн хурал тăраççĕ. Обществăллă çуртсем патĕнче ответлă постсем организациленĕ.

Вут-кăварпа кĕрешме Сиккассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз та хатĕрленнĕ. Дружинăра начальник пулса хĕрарăм Хонюкова ĕçлет. Кунта та каланча çинче кунĕн-çĕрĕн хурал тăраççĕ. Вут-кăвара хирĕç кĕрешмелли хатĕрсем юсавлă. Фермăсен çурчĕсем çумне шывсем, хăйăрсем лартнă, ответлă постсем организациленĕ. Кашни участокрах хуралсем пур. Кашни пӳрт умне катка-пичкесемпе шыв лартнă, хăйăрсем хатĕрленĕ. Дружинниксен пĕлĕвĕсене ӳстерме вĕсен занятийĕсене ирттереççĕ.

И. МАКСИМОВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Кăкшăм колхозĕнчи ирĕклĕ пожарнăй дружина (начальникĕ Владимир Живаев) хăй умне лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Кашни колхозник килĕнче пĕрер катка е пичке шыв тата пĕрер ещĕк хăйăр лартнă. Лашасем хупмалли картасем çумĕнче пĕрер чан шыв ларать. Каçхи вăхăтсенче пур участоксенче те хуралçăсем çӳреççĕ. Çавăн пекех колхоз кĕлетсем умĕнче те шанчăклă хуралсем тăратнă. Дружина насоссене тирпейлĕ тытса усрать. Вут-кăвара сӳнтермелли япаласем: пусма, пуртă, витре, пакорсем çителĕклĕ.

Иртнĕ çулсенче çырмасенчи шывсем усăсăр юхса выртнă пулсан, кăçал виçĕ пĕве тунă.

Г. АНДРИАНОВ.

Тăлăх ачасене усрама илеççĕ

УЛАТĂР. Ашшĕ-амăшĕсене нимĕç фашисчĕсем вĕлернĕ пирки, нумай ачасем тăлăха тăрса юлнă. Мускаври «Красный богатырь» фабрикăра ĕçлекен работницăсем ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасене усрама илес ĕçе пуçарчĕç. Халĕ вĕсен пуçаравĕ пĕтĕм Совет Союзĕпе сарăлса кайрĕ. Улатăр районĕнчи ĕççыннисем те тăлăх ачасене пулăшма тăрăшаççĕ. Урăх çĕртен куçса килнĕ Кудинова юлташ икĕ тăлăх ачана пăхса ӳстерет. Седякин юлташ та пĕр хĕрачана усрама илнĕ. Серенковсен çемьинче икĕ çулхи Зинăна ăшшăн пăхаççĕ. Явлей ялĕнчи Шаварин юлташсен килĕнче икĕ тăлăх ача ӳсет.

Махорка фабрикинче ĕçлекенсем тăлăха юлнă ачасене пулăшас тĕлĕшпе ятарласа воскресник туса ирттернĕ. Унта пурĕ 400 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Вăл укçана ачасене валли тăхăнмалли япаласем илме янă.

10 кашкăр çури тытнă

Ямашкассинче (Канаш районĕ) сунарçă Назаров Порфирий 1927 çултанпа 148 кашкăр çури тытнă. Кăçалхи май уйăхĕнче вăл вăрманта кашкăр йăви тупнă. Çĕр айĕнчи йăвара кашкăрăн 10 çури пулнă. Сунарçă вĕсене килне илсе таврăннă.

И. МАКСИМОВ.

Пĕлтерӳ

Ыран, июнĕн 20-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Парткабинетăн лекцисем вуламалли залĕнче докладчиксем, агитколлектив руководителĕсем тата беседчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать. Докладăн теми:

«Совет халăхĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешме тытăнни çулталăк тултарчĕ».

Докладчик — Сдобнов юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКОМУ ТРЕСТУ ТОРГПЛОДООВОЩ

требуются: зоотехник, техник-строитель, товароведы, работник по снабжению, бухгалтер-ревизор, юрисконсульт, слесаря, шофера.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Свердлова, 35.

3—3

Чувашской Республиканской конторе Промышленного Банка СССР

ТРЕБУЮТСЯ: финансисты-кредитники, конюх-возчик и машинистка.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 25.

ПРОМБАНК.

3—3

ПРОПАЛИ ДВЕ ЛОШАДИ

колхоза «Сюлду» Чебоксарского района. Приметы одной: масть гнедая, грива на обе стороны; приметы другой: масть светлобулоная, грива направо. Сообщить колхозу «Сюлду» Чебоксарского района.

МОСКОВСКИЙ ГИДРОТЕХНИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ

ОТКРЫВАЕТ ФИЛИАЛ В ГОР. МАРИИНСКОМ-ПОСАДЕ ЧУВ. АССР,

об'являет прием студентов на первый курс 1942—43 учебного года.

Учебные занятия на первом курсе института в 1942—43 учебном г. будут производиться при Мариинско-Посадском техникуме землеустройства и мелиорации профессорами и преподавателями Московского гидротехнического института, а со 2-го курса — в Москве.

Институт готовит высоко-квалифицированных инженеров-гидротехников для строительства гидроэлектростанций, гидротехнических сооружений, для производства насосных станций, буровых работ, водопроводов, торфоразработок, с/хоз. мелиорации, установки ветродвигателей, готовит педагогические кадры для гидромелиоративных техникумов.

Окончившие средние школы, рабфаки и техникумы в 1941—42 годах на I курс института принимаются без испытаний, а окончившие указанные школы ранее подвергаются испытаниям: по математике, физике, химии, русскому языку и литературе.

Техникум имеет хорошую столовую, свою продовольственную базу, учебное оборудование. Принятые будут обеспечены квартирой, постельным бельем, а отличники учебы и демобилизованные из РККА по болезни обеспечиваются стипендией.

Желающие поступить должны подать заявления с соответствующими документами по адресу: гор. Мар. Посад, земтехникум.

Все подробности можно узнать в канцелярии земтехникума.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 838 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64